*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

99 (2412) №
Хакĕ ирĕклĕ
1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2013, раштав, 27

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХЪ̆ТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## УЯВ САЛАМĔ



**Хаклăентешĕмĕрсем! Сире Çĕнĕ 2014 çулпа тата Раштавпа чун-чĕререн саламлатăп!**

Хыçа юлакан 2013 çул республикăшăн çăмăл пулмарĕ, çапах, пĕтĕмĕшле илсен, вăл ăнăçлă иртрĕ. Пирĕн пĕрлехи ĕçе тĕрлĕ шайра пысăк хак пачĕç. Эпир çакăнпа мăнаçланма пултаратпăр!

Чăваш Енре хальхи йышши тăвата предприяти хута кайрĕ, пысăк тухăçлă çĕрçĕр ĕç вырăнĕ йĕркеленчĕ. Строительство комплексĕ çине тăрса ĕçленипе кашни çын пуçне пурăнмалли çурт-хваттер хута ярас енĕпе республика федерацин Атăлçи округĕнче лидерсен йышне кĕчĕ. Пирĕн хресченсем пахча çимĕçе, тырпула пухса кĕртес тесе çанталăк япăххине пăхмасăрах тар тăкрĕç. Сывлăх сыхлав тытăмне модернизацилессипе çыхăннă программа лайăх пурнăçланчĕ. Йăлăмра пурăнакансем патне çут çанталăк газĕ çитермешкĕн «Газпром» 500 миллион ытла тенкĕ уйăрчĕ. Çакă Атăл леш енне аталантарма, сывлăха çирĕплетмелли учрежденисен тытăмне йĕркелеме май парать.

Пирĕн чи пысăк пуянлăх, пуласлăх – ачасем. Пурнăça юратакан, сывă ачасем тулли те çирĕп çемьере çеç ӳсме пултараççĕ. Çавăнпа Чăваш Енре çемьесене, амăшĕсемпе ачисене пулăшмашкăн тĕрлĕ мера йышăннă, вĕсем пурнăçланаççĕ. Çĕнĕ 11 садик уçрăмăр, шкул ӳсĕмĕчченхи ачасене валли 6,5 пин вырăн хатĕрлерĕмĕр. Çакă 3-7 çулсенчи ачаллă çемьесене пурне те тенĕ пекех черетре тăрассинчен хăтарма май пачĕ.

Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем тăрăшнипе республика физкультурăпа спорт енĕпе «Раççей регионĕ» номинацире наци премине тивĕçрĕ. Чăваш Ен 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионачĕ, 2016 тата 2018 çулсенче хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокĕ ирттерме ирĕк илчĕ. Иккĕленместĕп: тĕнче шайĕнчи ят-сумлă çак ăмăртусем паллă пулăм пек асра юлĕç, физкультурăпа спорта аталантарма май парĕç.

Хаклă юлташсем! 2014 çул Раççейре – Культура çулталăкĕ. Чăваш Ен малашлăхĕ хамăрăн ĕçчен, ырă та уçă кăмăллă халăхăн культура еткерлĕхне, йăли-йĕркине упраса хăварнинчен килет. Пултарулăх енĕпе аталанма, ăс пухма, тăнăçлăха упрама, туслăха çирĕплетме условисем тусан çеç эпир малашлăха шанчăклăн пăхма пултаратпăр.

Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, юрату сунатăп! Кашни килтех, кашни çемьерех ытлă-çитлĕх, килĕшӳ, ăнăçу хуçаланччăр! Уяв ячĕпе саламлатăп сире! Çĕнĕ 2014 çулпа!

**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

## КĔСКЕН

**Паян, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕнче, Шупашкар хулинче Олимп çулăмĕн эстафети иртет. Унта çулăма йăтакан 163 çын хутшăнать, вĕсенчен кашниех Олимп çулăмне 200 метра яхăн йăтса чупĕ. Чăваш Енре эстафета тăршшĕ – 33 çухрăма яхăн.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 7 сехет те 03 минут. Уйăх каталать. Хĕлимун кунне пăхса нарăс уйăхĕ мĕнле килессе чухланă. Кунĕ сивĕ пулсан çулла ăшă тăрĕ. Юрлă та çиллĕ пулсан – çитес çул тыр-пул ăнса çитĕнессе. Кун тăршшĕнче çанталăк темиçе тĕрлĕ улшăнсан – хĕл ăшă пулĕ.

**ЫРАН** – Трахвин кунĕ – пуш уйăхĕ мĕнле пуласса систерĕ.

**ВИÇМИНЕ** – Агей кунĕ. Ăна пăхса ака уйăхĕ мĕнлерех пуласса тавçăрнă. Ирпе сивĕ тĕк Кăшарни кунĕччченех сивĕ пулĕ.

### Кăрлач: ăшă, сивĕ, тӳлек

Раççей географи пĕрлешĕвĕ пĕлтернĕ тăрăх – Вăтам Атăлçи тăрăхĕнче кăрлач уйăхĕн пирвайхи кунĕсенче 2 градус сивĕрен пуçласа 3 градус таран ăшă пулмалла. Пĕрремĕш вунă кунлăх вĕçленнĕ тĕле çанталăк сивĕтет (каçхине 23 градус таран), анчах тепĕр эрнерен кăнтăрлахи температура 3-8 градуспа танлашĕ. Кăрлачăн 20-мĕшĕ тĕлне тӳлек çанталăк, 12-17 градус сивĕ пулĕ. Уйăх вĕçнелле каллех ăшăтса ярĕ.

# Лаша пулнă, пур, пулĕ те

Тĕпчевçĕсене ĕненес пулсан Çĕр çинчи пĕрремĕш лаша 60 миллион çул каялла кун çути курнă. Зоологсем ăна Эогиппус ( Шурăм пуç лаши) ят панă. Хальхи лашасемпе танлаштарсан çав тери пĕчĕк пулнă вăл: 5 кг ытла тайнă, тăршшĕ 35 см çитнĕ. Малти урисем тăватă чĕрнеллĕ, хыçалтисем виççĕллĕ пулнă имĕш.

Унтанпа лаша ĕрчетес ĕç сиккипе чупнă темелле. Лашасăр хресчен хăйне алăсăр-урасăр пекех туйнă. Пуянраххисем темиçе лаша та усранă, тулли вăйпа ĕçлеттернĕ вĕсене, юратса пăхнă. Ут валли урапа-çунине, сӳсмен-йĕвенне, нăхтине, пĕккине, йĕнерчĕкне тата ытти хатĕре ăсталама пĕлекенсене вара хисепленĕ. Лаша вăйĕ упа вăйĕнчен ирттернĕ тенĕ. Ĕç выльăхĕпе çĕре сухаланă, сӳреленĕ, тырă çапнă тата ытти çĕрте усă курнă. Колхозсенче те ĕç лашисем валли çĕнĕрен те çĕнĕ витесем тунă. Техника аталаннă май вара унран писсе пынă. Анчах чăваш çыннишĕн лаша пулнă, пур, пулĕ те.

**Тухăç календарĕпе килĕшӳллĕн çитес çул – Кăвак Лаша çулталăкĕ.** 2014 çула республика лашапах кĕтсе илĕ. Раштавăн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре 6139 лашана шута илнĕ: 4406 пуç – уйрăм çынсен (пĕлтĕр – 4300), 1532-шĕ – коллективлă ял хуçалăх предприятийĕсен, 201 пуç хресчен (фермер) аллинче.

Лаша çын пурнăçĕ тенĕ ватă çын. Апла пулсан пурнăç малалла-ха.

# Пĕчĕкки пысăккинчен иртгернĕ

Канаш районĕнчи Хучелти Николаевсен кил хуçалăхĕ 2014 çула пони лашасемпе кĕтсе илет. Пилĕк пуçа çитнĕ вĕсен шучĕ. Амăшĕпе ашшĕн, Брусничкăпа Тростникăн, ытарлă каласан, виçĕ чипер «хĕр». Кĕсресене Брюнетка, Бриллианитка, Быстрицкая ятсем хунă. «Мĕншĕн чăваш ячĕсем мар?» – тесен кил хуçи Николай Николаевич çапла хуравларĕ: «Йĕрки пур. Ашшĕпе амăшĕн ячĕсем мĕнле саспаллирен пуçланнине пăхса ят параççĕ çамрăк выльăха. Кĕсресем хăмласа пачĕç те ячĕсем те «Б» саспаллирен пуçланаççĕ. Кĕçĕннине амăшĕ шутламан-туман çĕртен хăмларĕ, çавăнпа Быстрицкая ят хурас терĕ арăм. Халĕ акă телевизорпа биатлон ăмăртăвне пăхатăп та тепре хăмлас пулсан понине тĕнчери паллă биатлонист ятне парас шухăш çуралчĕ».

Хăй вăхăтĕнче выльăх тухтăрĕ пулнă специалист пони кашни çулах хăмламаннине пĕлтерчĕ. Йыш хăвăртах хушăнмасть апла.

Илĕртӳллĕ пĕчĕк çеç понисем Николаевсене кил хуçалăхĕнчи ĕçсене пурнăçлама пулăшаççĕ (темиçе çул ĕнтĕ),чуна та килентереççĕ, йăпатаççĕ. Пĕр ĕç тăвассишĕн çемье пуçлăхĕ пысăк лашапа та çырлахĕччĕ. Пони усриччен кил хуçалăхĕнче ветеринарăн 3 пуç таран пулнă вĕсем. Канăça пĕлмен çыннăн юнĕ вылять, çĕннипе, хальччен курманнипе ытларах кăсăкланас килет. Кăсăкланать те вăл. Голландипе Италире акă пони лаша полицире те службăра тăрать-мĕн. Вăхăт çитсен вăл е ку званипе (майора çитни те пулнă) тивĕçлĕ канăва тухать.

Пони усрас шухăшлисем пирĕн республикăра татах та пур иккен. Николай Николаевичран Йĕпреç районĕнчи пĕр пенсионер пони туяннă. Ĕç лаши вырăнне усă курма мар (пони кунне 3 кило утăпа 1 кило сĕлĕ çинипе çырлахать), чунне йăпатма. Ĕçлеме кил хуçин мотоблокĕ те пур-мĕн.

Хусан, Чĕмпĕр облаçĕсене те ăсаннă Николаевсен пони лашисем. Вĕсене анчахрах усрама тытăннисем вара выльăх тухтăрĕнчен сĕнӳ-канаш ыйтма çӳреççĕ.

«Ытларах савăнасчĕ, сахалрах кĕвĕçесчĕ пирĕн, тăванăмăрсем! Кашниех мĕнпе те пулин кăсăклантăр, чун йăпатмăш ĕç туптăр», – Çĕнĕ çула çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевпе пуçлама сунать килти витере тĕлĕнтермĕш утсем тытакан ыр çын.

**Ирина НИКИТИНА.**

# 2014 – хурлăханпа крыжовник çулталăкĕ

**Авалхи славян йăхĕсен хăйсен çулталăк календарĕ пулнă. Кашни çул пĕр-пĕр сад-пахча культурипе çыхăннă. Мĕншĕнне халĕ татса калама та йывăр. Ахăртнех, çакă вăл е ку культурăна ӳссе аталанма уйрăмах ăнăçлă килсе тухнă хĕвел ăшшипе çыхăннă. Кăçалхи çул пăрçа çулталăкĕччĕ. Çитес çул вара – хурлăханпа крыжовник çулталăкĕ.**

### Хурлăхан çисе ӳсрĕмĕр

Ытти çулсен ячĕсене пĕлес килет-и? 2015 çул – хăмла, 2016 – çарăк, 2017 – çăка, 2018 – тĕш тырă (ыраш, хура тул, вир), 2019 – хăмла çырли, 2020 – кишĕр, 2021 – купăста, 2022 – сухан, 2023 – пан улми, 2024 – хăяр, 2025 – пăрçа, 2026 – хурлăханпа крыжовник çулталăкĕ.

Европăра хурлăхана XV-XVI ĕмĕрте çитĕнтерме тытăннă. Раççейре вара XI ĕмĕртех. Малтанлăха хурлăхан тĕмĕ мăнастирсемпе улпутсен хуçалăхĕсенче кăна тĕл пулкаланă. Каярах пур çĕре те сарăлнă.

2-мĕш стр. ➔

| ÇАНТАЛĂК Шупашкарта | Вăхăт | 27.12 | 28.12 | 29.12 | 30.12 | 31.12 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2-4 сехетре | –6 | –5 | –3 | –3 | –3 |
| | 14-16 сехетре | –3 | –1 | 0 | 0 | –1 |
| Юр çăвать | | – | – | – | – | ⁂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 758 | 759 | 758 | 755 | 753 |

## КĔРЕКЕРЕ – ЫР СУНСА

Çурт лартаканăн çирĕп пултăр никĕс.
Хресчен, ăнса пулинччĕ тыр-пулу.
Хунав лартсан вăрман кашлатăр тикĕс.
Çул хывакан, ан таталтăр çулу.




***

Кашни ир ырă пултăр. Ăнланакан пуçлăх, укçаллă ĕç пултăр. Урара лайăх пушмак, лавккара йӳнĕ тавар пултăр! Кашни çĕнĕ кун уяв пек иртгĕр! Çапла пултăр!

*Хаçатăн çитес кăларăмĕ 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 10-мĕшĕнче тухать.*

# 2013 çул: асра юлнă самантсем

2013 çулта асра юлнă самантсенчен пĕри – Республика кунĕ. Уяв вăхăтĕнче Шупашкарта ирттернĕ VI экономика форумне Раççейĕн 27 регионĕнчен, чикĕ леш енчи 8 патшалăхран, федерацин тĕрлĕ ведомствинчен 1000 ытла çын хутшăннă. Регионсен XX куравне те хăнасем йышлăн пуçтарăннă. «Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх» курава Раççей Федерацийĕн 13 субъектĕнчен тата Итали-рен 228 организаци килнĕ, унта 60 пин ытла çын пырса курнă. Ĕçлĕ хутшăнусем вăхăтĕнче республика аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ 3,5 млрд тенкĕлĕх килĕшу-сем тунă.

Халăх пултарулăхĕн **«Раççей çăл ку-çĕсем» фестивальне** юрă-ташă ăстисем Раççейĕн 29 регионĕнчен килсе çитнĕ. 30 ытла коллектива, 700 çынна тăван-латнă вăл.

Çĕртме уйăхĕн 24-25-мĕшĕсенче «Ак-конд-агро фирма» пĕрлешӳре иртнĕ **«Уй кунĕ-2013»** курава хамăр çĕр-шывра ял хуçалăх техникипе, паха вăрлăхпа, им-çампа тата ыттипе тивĕçтерессипе ят-сум çĕнсе илнĕ организацисем хутшăннă, перекетлĕ те тухăçлă ĕçлекен техникăпа паллаштарнă.

Красноармейски салинче **керамика завочĕ** хута кайнă. Вăл хальлĕхе рес-публикăра Европа шайĕнчи паха строй-материал кăларакан пĕртен-пĕр завод.

Етĕрнере **сĕт тирпейлекен завод** уçăлнă. Республикăра чи хăватли шут-ланать, пĕр сменăра 200 тонна сĕт тир-пейлеме пултарать, талăкра вара – 500 тонна таран.

Шупашкарта иртнĕ **Пĕтĕм чăвашсен Ака туйĕнче** Тутар Республикинчи, Пушкăртри, Хакасинчи, Ямал-Ненец ав-тономи округĕнчи, Беларусри чăваш фольклор ансамблĕсем, Мускавпа Мур-манск хулисенчи, Оренбург, Пенза, Са-мар, Сарă ту, Ростов, Чĕмпĕр, Сверд-ловск, Челябинск облаçĕсенчи тата ытти тăрăхри (ку шутра – хамăр республикă-рисем те) юрă-ташă ушкăнĕсем савăнса киленнĕ.

Шупашкарсем тăван хула кунне анлăн паллă тунă. «Çăлтăрпа» ирттернĕ ирхи зарядкăна 28 пин çын пынă, çавна май вăл **Гиннесс рекордне** лекнĕ.

Чăваш Республики физкультурăпа спорта аталантарассипе пуçласа **наци премине** тивĕçнĕ. Чи сумлă «Раççей ре-гионĕсем» номинацире çĕнтернĕ вăл.

**Чăваш наци конгресĕн отчетпа суй-лав съезчĕ иртнĕ.**

Валерий МУРАВЬЕВ

# Историе ăсанчĕ кивĕ çул...

Историе ăсанчĕ кивĕ çул.
Умра – çĕнни. Мĕнпе-ши савăнтарĕ?
Паян – уяв. Ентешĕм, йăлтăр кул!
Тунсăхăма, тен, савăнăç путарĕ?

Эс тĕлĕнсе пăхатăн ман куçран:
Чи чаплă уявра халь тунсăхлар-и?
Шăп пĕр çулталăк манăн пурнăçран
Самант çеç тухса ӳкрĕ. Кулянар-и?

Ырри унта ман пулнă сахал мар:
Ырра шанса ырми-канми ĕçленĕ,
Ĕмĕтĕме пурнăçлассишĕн тар
Сахал-и тăкнă, канăçсăр тимленĕ?

Çулталăк ватăлни те темех мар.
Тур пулăшсан, хам тăрăшсан – пурнатпăр.
Апла кирлех-ши халь тунсăхлама?
Çĕклер черкке! Йышпа шеп савăнатпăр!

## КĔСКЕН

Раççейре 988 çулччен Çĕнĕ çула пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче паллă тунă. Ятарласа чие йывăççĕ ӳстернĕ. Вăл шăпах çак вăхăт тĕлне чечеке ларнă, ырă шăршипе савăнтарнă.

Виç çĕр çул каялла I Петĕр патша нимĕç тусĕсем патĕнче хăнара пулнă. Унта канихветпа, пан улмипе илемлетнĕ тĕлĕнтермĕш чăрăш курнă. 1699 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнче патша указ кăларнă: Çĕнĕ çула Европăри пек кăрлачăн 1-мĕшĕнче кĕтсе илмелле. Кăвайт чĕртме, фейерверк яма, пĕр-пĕрне саламлама, пӳрте чăрăшпа илем-летме хушнă. Анчах Петĕр патша вилнĕ хыççăн указ манăçа тухнă.

Çĕнĕ çула уявласси, чăрăшсем лартасси II Кĕтерне патша вăхăтĕнче çĕнĕрен вăй илнĕ. XIX ĕмĕр вĕçĕнче Санкт-Петербургра пирвайхи хут чăрăш пасарĕ уçăлнă, çавăнтан вара вăл кашни киле çитнĕ. Пурте ăна юратса илемлетнĕ.

# Хурлăханпа крыжовник çулталăкĕ



1-мĕш стр.

XV-XVI ĕмĕрсенче Мускава килсе курнă ют çĕр-шыв çыннисен сăмахĕсем тăрăх – хула сад пахчи ăшĕнче ларнă. Куç тулли хĕрлĕ, хура тата шурă хурлăхан йăтăннă. Уйрăмах юхан шыв хĕрринче нумай пулнă вĕсем.

XIX ĕмĕрте хурлăханран эрех тума пуç-ланă. Италипе Францире çине тăрсах хура хурлăхан ĕрчетнĕ пулсан, Голландипе Кăнтăр Америкăра хĕрлĕ хурлăхан çитĕнтернĕ.

Чир-чĕртен сипленме те ăнăçлă усă курнă хура хурлăханпа. Кăчки, çулçи, çырли – пур-те усăллă. Хурлăхан çырли аскорбин кисло-типе, тĕрлĕ витаминпа, микроэлементсемпе пуян. Кăчкипе çулçинче эфир çăвĕ, фитон-цидсемпе аскорбин кислоти пур. Хура хурл-ăханри чухлĕ С витамин урăх нихăш улма-çырлара та çук. Хурлăхан çырлинче çавăн пекех тимĕр, фосфор, кали тăварĕсем, пан улмипе лимон кислотисем пур. Иммунитета çирĕплетме пулăшать. Хурлăхан çулçи тутлă шăршăллă пулнăранах хĕрарăмсем хăяр-по-мидор тăварланă чухне кĕленче тĕпне çак асамлă çулçа хураççĕ.

### Хĕрли, хури, шурри...

Крыжовника те мăнастирсен сачĕсенче вун пĕрмĕш ĕмĕртех ĕрчетме тытăннă. Виç-çĕмĕш Иван патша хушăвĕпе Мускав юхан шывĕн хĕррипе ятарласа лартнă крыжовник сачĕсем ешернĕ. Сачĕсем ешернĕ-ха, анчах çырлине çимен. XIX ĕмĕрте кăна акăлчан се-лекционерĕсем шултра çырла паракан сорт-сем шухăшласа кăларнă. Каярах вĕсем Çурçĕр Европăра сарăлнă, унтан Раççее çитнĕ.

Нимĕнпе те танлаштарма май çук йӳçек-пылак тутă калакан çырла чăннипех те питĕ усăллă. Унта А, В ушкăнри витаминсем, мик-роэлементсем, флавоноидсем пур. Çырла-ри пектин веществисем вара организмран йывăр металсене кăларма пулăшаççĕ. Шыçă чирĕсенчен хӳтĕленме пулăшакан серотин та пур унта.

Хальхи вăхăтра хурлăханпа крыжовника килти пахчасенче кăна мар, промышленноç сачĕсенче те ӳстереççĕ. Хурлăхан туса илес-сипе тĕнче рынокĕнче Раççее çитекенни çук. Çулталăкне 400 пин тонна ытла çырла туса илеççĕ. Танлаштарма: Польшăпа Германире 100-шер пин тонна ытла, Украинăра, Вели-кобританире, Австрире – 20-шер.

Çĕр чăмăрĕ çинче 150 тĕслĕ хурлăхан çитĕнет теççĕ. Раççейре – 30-а яхăн: хури, хĕрли, шурри, ылтăн тĕсли, вăрăлли, хытă хупăлли, вĕтĕреххи, шултри, çемçе ăшли...

## СĔНӲ-КАНАШ

# Тухтăрсене итлер

**1 Уяв сĕтелĕ хушшине выçă хырăмпа ларма юрамасть.** Чылайăшĕ кайран тăраничченн çиетĕп-ха тесе ятарласа тăхтать. Кил хуçи арăмĕсем вĕтĕленсе чаплă сĕтел хатĕрленĕ хушăра тепĕр чух ăна-кăна çырткаласа илме май тупаймаççĕ-ха. Кун пек пек чухне организмра мĕн пулса иртет? Хырăм çав тери выçса çитнипе тата кăштах эрех сыпнипе хамăр мĕн чухлĕ çинине те асăрхами пулатпăр, сĕтел хуш-шине ларнă-ларманах тăранса ларатпăр.

**Сĕнӳ-канаш:** кун тăршшĕнче темиçе хут та çикелесе илмелле. Протеинлă çимĕçсене çырткаламалла: сыр, чăх ка-кайĕ, мăйăр. Мĕн çинине лайăхрах ирĕл-терме корица, импĕр, пăрăç пулăшĕ. Çавăн пекех пахча çимĕçĕ, улма-çырла, сĕткен тавраш лайăх. Йогурт, кĕвĕлĕк, тăпăрчă аван. Çăнăхран хатĕрленĕ апат-çимĕçе çиме тăрăшмалла мар.

**2 Кăшт та пулин тĕлĕрсе илмеллех.** Унсăрăн çур çĕрччен ларма вăй-хал юлмĕ. Выртса канма май килмесен шыва кĕрсе уçăлмалла.

**3 Шампань эрехшĕн «тус» çук.** Çавăнпа та ăна ытти эрехпе хутăштарма кирлĕ мар. Ăна та, кăна та ĕçме тивсен çакна шута илĕр: эрех хăвачĕ пĕр шайра пулмалла, ха-яррине йăвашши хыççăн çеç сыпмалла.

**4 Хăналаннă вăхăтра ытларах шыв ĕçмелле.** Çакă организма шывсăрлан-тарасран пулăшĕ, юнри алкоголь шайне чакарĕ, наркăмăшлă япаласене кăларма пулăшĕ. Ахаль шыва нимĕн те çитмĕ.

**5 Спиртпа газлă напитоксене пĕрле ĕçмелле мар:** çын хăвăртах ӳсĕрĕлет.

**6 Спиртлă пылак напитоксем хырăмлăх ай парĕшĕн сиенлĕ.** Ку тĕлĕшпе уйрăмах шурă тĕслĕ çырла эрехĕ хăрушă.

**7 Малтанах хатĕрленмелле.** Тахçан-танпах хаяр эрех ĕçмен пулсан уявч-чен темиçе кун маларах 50-шар грамм шур эрех ĕçме юрать. Çакă пĕвере майĕпен чи явапла саманта хатĕрлесе çитерĕ.

**8 Апата ирĕлтерме пулăшар.** Уяв сĕтелĕ çинче апата ирĕлме пулăшакан çимĕç пулмалла: морс, компот, улма-çырла, лимон, маринадланă помидорпа хăяр, йӳçĕтнĕ купăста.

**9 Пылак улма-çырла ан илĕрттĕр.** Вăл аш-пăшлă тата çуллă çимĕçпе хутăш-са хырăма карăнтарса ярать.

**10 Виçеллĕ çиер.** Выçăхланмасăр çини ку тараничченн никама та сиен кӳмен. Çĕнĕ çул каçĕ вăрăм, куçа илĕртекен çимĕçсене харăс тутанма ан тăрăшăр. Кăштахшар, анчах час-часах çийĕр.

## ХАМĂРА ХАМĂР ПУЛĂШАР

**Выçă хырăмпа эрех-сăра ĕçмелле мар. Ĕçиччен те, ун хыççăн та питĕ лайăх апатланмалла. Çуллă апат пыршăлăха хупланă май эрех майĕпенрех сăрхăнать. Тăтăшах хускалсан та хăвăртах ӳсĕрĕлмĕр.**

**Мухмăртан.** Сĕтел хушшине ларичченн алкоголь сиенне чакарма 3 таблетка Капи-лар е активациленĕ кăмрăк (активирован-ный уголь, 10 кг йывăрăш пуçне – 1 таблет-ка) çăтмалла. Кайран та, сĕтел хушшинчен тухсан, çавăн чухлех тепĕр хут ĕçмелле.

Мухмăра ирттерме тăварланă хăяр шывĕ пулăшĕ. Лимонпа пыл хушнă чей ĕçмелле, уçă сывлăшпа сывламалла, çы-вăрни аван. Çак йĕркене – чей, уçă сывлăш, ыйхă – пăсмалла мар.

**Пĕвере пулăшма.** Кирек хăçан та хăна-ланнă чухне пĕвере йывăр килет. Ыратнине ирттерме, пухăнса ларнă ытлашши вата кăларма шăлан (шиповник) чейĕ ĕçни усăллă.

**Наркăмăшлансан.** Хырăмлăха тăвар калаттарнă ăшă шывпа (2 литртан кая мар, кашни 2-3 стакан хыççăн пӳрнене çăвара чиксе хăсмалла) чӳхемелле. Наркăмăша организма сăрхăнма чăрмантаракан кĕсел, крахмал, сĕт, тăпăрчă шывĕ ĕçмелле.

Ӳт температурине виççе пăхмалла: 37,4 градусран иртсен тухтăр патне кайма тивĕ. Температура малалла ӳссен, куç кураслăхĕ чаксан, хăстарсан, пуç ыртасан (мухмăра пула мар) çийĕнчех «васкавлă пулăшăва» чĕнсе илмелле.

**Кăкăр хĕртме тытăнсан.** Çуллă апат-çимĕçпе газлă пылак шыва тата шампань эрехне пула кăкăр хĕртме пултарать. Хырăмлăх йӳçеклĕхĕ пысăк чухне те пулать ку. «Альмагель А» препарат кăкăр хĕртнин-чен, хырăм ыратнинчен пулăшĕ.

***Чылайăшĕ пыр хĕртнĕ чухне апат содипе усă курать, анчах унпа тăтăшах сипленме юрамасть, хырăмлăх ракĕ пуçланас хăрушлăх пур.***

✓Çĕнĕ çул каçĕ çăлтăр курăнсан пахча çимĕçĕ лайăх пулать.
✓Çĕнĕ уйăх çуралсан тăваттăмĕш кунне мĕнле – уйăхĕпех çав кун пек пулать.
✓Сурхури кун кăнтăрлаччен ăшă та тăман пулсан тырă-пулă ăнать.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**1. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**2. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**3. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**4. Кирпич разный, керамблок.** Д-ка. Т. 89276678378.

**5. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**6. Станки** для валяния валенок. Т.: 89278617589, 89373810585.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**8. Кирпич** любой, **швеллер,** уголок, **арматуру, трубы** мет. и для канализации с доставкой и выгрузкой на манипуляторе. Тел. 89022881677.

**10. Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**13. ОКНА** пластиковые, **ДВЕРИ** стальные. Заводское производство. Гарантия 5 лет. Рассрочка. Дешево. Т. 89276689303.

**14. Гравмассу,** гравий, **песок,** щебень, **керамзит.** Доставка. Т. 89053465671.

**15. Заборы, ворота, калитки, скамьи** кованые. Т. 8-927-668-95-87.

**24. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**25. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**31. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**32. Пластиковые ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 89875754704.

**33. ОКНА** пластиковые, стальные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89278404225.

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХЪТЛĔХ СЫВЛĂХ

ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

**Халăх шухăш-кăмăлне тĕпчекен Пĕтĕм Раççейри центр кăтартăвĕсем тăрăх – Раççей çыннисен 70 проценчĕ Çĕнĕ çула килте кĕтсе илет, 13 проценчĕ – хăнара, 10-проценчĕ – ют çĕр-шывра, 4 проценчĕ – ресторансемпе каçхи клубсенче, 3 проценчĕ тĕрлĕ сăлтавпа Çĕнĕ çула уявламасть.**

**Çĕнĕ çул чăрăшне электричествăпа илемлетме 1882 çулта Эдвард Джонсон американец сĕннĕ. Çавăнтанпа пан улмипе мăйăр выранне гирляндăсем çакма пуçланă.**

## ÇĔНĔ ÇУЛ СĔТЕЛĔ

Лаша курăкпа тăранса пурăнакан выльăх, çавăнпа тĕп вырăнта лайăх илемлетнĕ салатсем пулмалла. Вĕсене хатĕрленĕ чухне пахча çимĕçĕпе май пур таран усă курмалла. Лаша уйрăмах çĕр улми, кăшман, кишĕр килĕштерет. Çавăн пекех салатра пан улми, банан, грейпфрут хутăштарсан аван. Тинĕс çимĕçĕсенчен хатĕрленисем те ытлашши пулмĕç. Чи кирли вара – ешĕл çимĕç! Сĕтел çинчи мĕн пур çимĕçе петрушкăпа, укроппа илемлетме юрать.

Çĕнĕ çул сĕтелĕ çине лаша ашĕсĕр пуçне кирек епле аш-пăш та лартма юрать. Калăпăр, пан улмипе пĕçернĕ кăвакал, чăх е хур, çавăн пекех сысна е сурăх ашĕ.

Лаша пылак юратать. Апла вĕт кукăль таврашĕпе торт хатĕрлемеллех. Сĕлĕ печенийĕ те кирлĕ! Йывăç савăт-сапа çине хунă улма-çырла вара сĕтеле пушшех илемлетĕ. Лаша хаяр эрехе юратмасть. Апла шампань эрехĕпех çырлахмалла.

Лаша ырă та юмарт выльăх. Хăвăр тăрăшсан вăл сирĕн ĕмĕтĕрсене пурнăçа кĕртĕ. Ăна юрассишĕн уяв сĕтелне май пур таран пуянрах та илемлĕрех тăвар.







### «Шурă çилхеллĕ лаша» салат

**400 г ĕне ашĕ, 1 банка консервланă пăрçа, пĕçернĕ 3 кишĕр, 3 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 3 çĕр улми, маринадланă 3 хăяр, майонез, ешĕл укроп, тăвар, пăрăç.**

Çĕр улмине, кишĕре, çăмартана тата ĕне ашне уйрăммăн пĕçермелле. Пахча çимĕçне тăваткăлласа турамалла, салатăн çиелти сийне витме 1 кишĕре шултра теркăпа хырмалла. Çăмартана вĕтетмелле. Çур çăмарта шуррине çилхине тума улăм пĕрчи евĕр турамалла. Пăрçа шывне тăкмалла. Маринадланă хăяра, какая тăваткăлласа турамалла. Хатĕрленĕ мĕн пур çимĕçе хутăштармалла, тăварпа пăрăç калаттармалла, майонез хушмалла. Унтан ăна ăшăх турилкке çине лаша пуçĕ евĕр калăплаласа хумалла. Çиелтен салата теркăланă кишĕрпе сапмалла, хăлхине – кишĕртен, йĕвенĕпе çăварне укроп тунинчен тумалла. Йĕвен кăшăлне тата сăмсине хăярпа е суханпа çирĕплетмелле, оливăран – куçне, çилхине – çăмарта шурринчен.

### «Лаша таканĕ» салат

**Ăшаланă чăх какайĕ, 1 баклажан, пуçлă 1 сухан, 1 хĕрлĕ кăшман, 2 çĕр улми, чăмăрла пĕçернĕ 3 çăмарта, пĕр ывăç аçтăрхан мăйăрĕ, майонез, тăвар, пăрăç.**

Вĕтетсе туранă баклажанпа сухана ăшаламалла, ытлашши çуне юхтарса илмелле. Пĕçернĕ çĕр улмине, хĕрлĕ кăшмана тата çăмарта шуррине уйрăммăн теркăламалла, чăх какайне вĕтĕ-вĕтĕ турамалла. Салата такана евĕрлĕ, варрине стакан лартса сийĕн-сийĕн, кашнин хыççăн майонез сĕрсе хумалла: çĕр улми, какай, баклажанпа сухан, вĕтетнĕ мăйăр, хĕрлĕ кăшман, çăмарта шурри. Кăмăл пулсан илемлетме юрать.

### Пан улмиллĕ чăх

**Чăх тушки, вĕри шывпа çемçетнĕ хура слива (чернослив, пĕр ывăç), 10 пан улми, 4 кашăк услам çу, тутă кĕмелĕх лимон сĕткенĕ, пăрăç, тăвар.**

1. Чăх тушкине лимон сĕткенĕпе сĕрмелле, тăварпа, пăрăçпа сăтăрмалла, ăшне хура сливăпа 2 пан улми (4 пая пайласа) чикмелле, фольгăпа чĕркесе 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше (холодильника) лартмалла. Унтан 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра сехете яхăн пĕçермелле, фольгана сӳсе илмелле.

2. Сакăр пан улмин варрине кăлармалла, путăк вырăнне хура слива чиксе чăх йĕри-тавра хумалла.

3. Чăха пан улмисемпе пĕрле каялла духовкăна лартмалла, сарă тĕс çапиччен кĕтмелле.

## Çĕнĕ тум тăхăнар

Çĕнĕ çула çĕнĕ тумпа кĕтсе илсен аванрах. Çĕнĕ тум ытлăх-çитлĕх, ăнăçу илсе килет теççĕ. Анчах мĕнле те пулин сăлтавпа çĕннине илеймесен, аялти кĕпе-йĕме те пулин çĕнни тăхăнма тăрăшмалла. Француз хĕрарăмĕсем, ав, Çĕнĕ çул каçĕнче аялтан хĕрлĕ тĕслĕ çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăнаççĕ. Çак тĕс усал вăйсене хăратасса, ырă арçынсене илĕртессе шанаççĕ. Çывхаракан çул Кăвак Лаша çулталăкĕ пулнине шута илсе кăвак е симĕс тумтир суйлама тăрăшмалла. Капăрланмалли эреш-мереш йывăçран тунă шăрçа, сулă, алка пулсан тата аванрах. Кирек мĕн тăхăнсан та уяв каçне хаваслă кăмăлпа иртерер, Лаша сăмса усса ларакансене юратмасть.

## КĔРЕКЕРЕ – ЫР СУНСА

Çĕнĕ çулта яланах çăмăл чĕрепе, тулли енчĕкпе çӳремелле пултăр!

## Ырра шанмалла, ĕненмелле!

● Çĕнĕ çул ячĕпе мĕн чухлĕ ытларах çынна саламлатăр, пурнăçăр çавăн чухлĕ ытларах ăнĕ.

● Курант çапма пуçличчен пĕр минут юлсан мандарин (апельсин) илсе хуппинчен тасатса чăрăш айне хумалла. Çакна курант пĕрремĕш хут çапиччен туса ĕлкĕрсен çулталăк телейлĕ пулĕ.

● Курант çапма пуçласан хăвăр ĕмĕтĕре хут çине çырса чĕртсе ярăр та часрах шампань эрехĕ тултарнă фужера ярăр, унтан ним юлми ĕçсе ярăр. Мĕн шухăшлани пурнăçланĕ.

● 12 çитиччен хĕрарăмсен хул пуççи çине тутăр уртса ямалла, сехет вун икĕ хут çапсан вара ăна хăвăртрах сирсе пăрахмалла. Мĕн пур чир-чĕр, япăххи кивĕ çулта юлĕ.

● Курантăн пĕрремĕш сассипе сулахай алла пĕр пуслăх укçана чăмăртаса çитес çулта укçаллă пулас тесе ĕмĕтленмелле. Унтан ăна шампань тултарнă стакана ярса хăвăртрах ĕçмелле. Кайран çав укça тăтăшах çумра пултăр.

● Çĕнĕ çулта апчхулатакан çын çулталăкĕпех телейлĕ пулĕ. Миçе хут апчхулатан – çавăн чухлĕ хĕр (каччă) юратĕ.

● Çĕнĕ çул умĕн никама та вут-çулăмпа çыхăннă япалана пама юрамасть теççĕ. Калăпăр, шăрпăк е зажигалка.

● Çĕнĕ çулта картла вылякан хĕрарăмăн хăярне чăхсем сăхса пĕтерĕç.

● Çĕнĕ çулта качча каяс текен хĕрсен сичĕ ачана парне памалла.

### ШӐТЛЕР-И?

Хĕрсемпе хĕрарăмсем! Тархасшăн, Хĕл Мучирен юмахри пек пурнăç туса пама ан ыйтăр. Пур пĕрех вăл сиртен çĕлтăр пике тăваймĕ. Ухмах Иванпа вара куç хупса тенĕ пекех паллаштарма пултарать.



Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп сире, хаклă пикесем! Çывăх юлташ тата шанчăклă мăшăр пулса, пурнăçри йывăрлăхсене пĕрле çĕнтерсе юратупа телей тупма тăрăшакан ырă кăмăллă та уçă чунлă пикепе паллашас кăмăл пур.

Эпĕ вăтам çулсенчи яштака та тĕреклĕ (180/80) арçын. Эрех-сăрапа иртĕхместĕп. Ачасене питĕ юрататăп. Çын пурнăçра тĕрĕс пурăнма тăрăшнине пуринчен те ытларах хаклатăп.

Николай. Тел. 8 961 338 99 44.

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, раштав уйăхĕн 30-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.05-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.30, 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.10-12.00 Пĕччен мар. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (6+) 21.30-22.00 Ӳнер тӳпинчи вĕçев. (12+) 22.05-23.00 Янра, юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10,16.05-16.10,17.05-17.10,18.05-18.10,19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, раштав уйăхĕн 31-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.05-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.05-21.30 Республика сасси. (12+) 8.05-8.30 Хыпарсем: çулталăк тишкерĕвĕ. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 17.05-17.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 18.30-19.00 Ырсунăм. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+)11.05-11.30 Новости: итоги года. (12+) 11.30-12.00 Çемье ăшши. (12+) 12.005-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.05-16.00 Радиотеатр. (12+) 16.05-16.30 Новости: итоги года. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.05-18.30 Хыпарсем: çулталăк тишкерĕвĕ. (12+) 19.05-22.00 Каçхи микс. (12+) 22.05-24.00 Çĕнĕ çул умĕнхи мыскара. (12+)
Çĕнĕ юрă – 6.00-6.05, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05, 20.00-20.05, 21.00-21.05, 22.00-22.05

**Юн кун, кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.30-8.00 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 6.30-7.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 7.05-7.30, 8.05-8.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, 19.30-20.00, 23.05-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Çемье ăшши. (12+) 9.05-10.00 Женская среда. (12+) 10.05-11.00 Мюзикл "Нарспи". 1 часть. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.05-16.00 Радиотеатр. (12+) 16.30-17.00 Çĕр сум. (12+) 17.05-18.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-19.30 Новости: итоги года. (12+) 20.05-20.30 Хыпарсем: çулталăк тишкерĕвĕ. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (6+) 21.05-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+). 22.05-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 23.05-24.00 Мюзикл "Нарспи". 2 часть. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.00-6.05, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05, 20.00-20.05, 21.00-21.05, 22.00-22.05

**Кĕçнерни кун, кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 6.30-7.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 7.30-8.00, 22.30-23.00 "Шуçăм" фольклор ансамблĕ.(12+) 14.05-14.30, 18.05-18.30,19.05-19.30, 20.05-20.30, 22.05-22.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.05-10.00 Çĕнĕ çул умĕнхи мыскара. (12+) 10.30-11.00 Радиовулав. (12+) 11.05-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав.(12+) 12.05-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.05-16.00 Радиотеатр. (12+) 17.05-18.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Çемье ăшши. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (6+) 21.00-22.00 Çичĕ юрă. (12+) 23.00-24.00 Неформат. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.00-6.05, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05, 20.00-20.05, 21.00-21.05, 22.00-22.05

**Эрне кун, кăрлач уйăхĕн 3-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-8.00 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 6.30-7.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 8.05-8.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 17.05-17.30, 18.05-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Çемье ăшши. (12+) 9.05-10.00 Радиовулав. (12+) 10.30-11.00 Здоровая нация. (6+) 11.05-12.00 Культурный багаж - Чувашия. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.05-16.00 Инçе çултан таврăнсан. (12+) 17.30-18.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.00-6.05, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.105, 20.00-20.05, 21.00-21.05, 22.00-22.05

**Шăмат кун, кăрлач уйăхĕн 4-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-7.30, 8.05-8.30, 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, 19.30-20.00 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 8.05-9.00 Женская среда. (12+) 17.05-17.30 Социальный вопрос. (12+) 9.30-10.00 Присягая Родине. (12+) 10.30-11.00 Радиовулав. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Çемье ăшши. (12+) 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-19.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 19.30-20.00 Библи калавĕсем. (6+) 20.00-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** - 6.00-6.05, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05, 20.00-20.05, 21.00-21.05, 22.00-22.05

**Вырсарни кун, кăрлач уйăхĕн 5-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 7.30-8.00 Символ веры. (12+) 8.05-8.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Детский сад. (12+) 9.30-10.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 10.00-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.00-11.30 Радиовулав. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.00-15.00 Радиотеатр.(12+) 15.30-16.00 Çемье ăшши. (12+) 16.05-17.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 17.30-18.00 Новогодняя кутерьма. (12+) 18.05-19.00 Культурный багаж - Чувашия. (12+) 19.05-20.00 "Çĕн ял" халăх ансамблĕ. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.00-6.05, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05, 20.00-20.05, 21.00-21.05, 22.00-22.05

***Нумайăшĕ шампань эрехне питĕ йăваш напиток вырăнне хурать. Тĕрĕссипе вара вăл ахаль эрехрен те ытларах ӳсĕртет. Çакă унта кăмрăк йӳçек газĕ пуррипе çыхăннă. Газ хăмписем йӳçеклĕхе хăпартаççĕ, çавăнпа шампань эрехне выç варла ĕçме юрамасть.***


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

34. **Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

35. **ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

36. Пластиковые **ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

46. **Блоки керамзитобетонные** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Т. 89176776846.

47. **Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дешево. Т. 89373866629.

50. **Отруби, зерно, к/корм.** Д-ка. Т. 89613412236.

53. **Отвалы, щетки, погрузчики на трактора. Низкие цены. Все новое.** Тел.: 8-927-851-68-58, (8352) 40-67-65.

54. **Пшеницу, ячмень, овес.** Т.: 89276666151, 89373731270.

56. **Ячмень, пшеницу, рожь,** кукурузу. Т. 8-917-669-26-53.

60. **Кобылу** жеребую – 45 тыс. руб., **жеребца** – 40 тыс. руб., **овец** Романовской и Цигейской пород на племя по 7 тыс. руб. Тел. 8-927-998-82-27.

61. **ВАЗ-2106** (1997 г. в., цвет белый, в хорошем состоянии). Цена 35000 руб. Т. 8-937-373-93-70.

### КУПЛЮ

57. **Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### УСЛУГИ

18. **Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

26. **Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает любые жизненные проблемы. Т. 89063856628.

43. **Установка забора** из профлиста, сетки рабицы, секции ворот (распашные, откатные, автоматика). Гарантия. Т. 8-917-651-80-57.

58. **Установка** котлов, насосов, радиаторов. Т. 8-927-841-71-94.

59. **Замена** электропроводки, счетчиков, СИП. Т. 8-960-314-25-32.

